1943
МАЙ
11
ЫТЛАРИКУН
98(6335) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Машинăпа тракторсен паркн е пысăк тухăçлăхпа ĕçлеттернĕшĕн, ЧАССР Наркомземĕпе Нарком земăн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине çаксене кĕртнĕ:

1. Елчĕк МТС-ĕ (директорĕ П. А. Яшин, политотдел начальникĕ Г. Ф. Михеев, старши механикĕ В. П. Павлов юлташсем). МТС çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 100,4 процент тултарнă.

2. Чкаловски МТС-ри хĕрарăмсен 5-мĕш тракторнăй бригади (бригадирĕ И. А. Ситов юлташ). Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 102,5 процент тултарнă.

3. Красноармейски МТС-ĕнчи Владимиров юлташ ертсе пыракан тракторсен бригади. Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана, çемçе суха çине куçарса шутласан, 113,3 процент тултарнă тата 85 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

4. Ф. Н. Ендеев — Первомайски МТС трактористчĕ. Вăл газогенераторлă тракторпа ĕçлесе, çемçе суха çине куçарса шутласан, 130 гектар ĕçленĕ, планпа 125 гектар сухаламалла пулнă.

5. Комсомольски МТС-ĕнчи 5-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ В. С. Степанов). Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 102 процент тултарнă тата 350 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

6. Шăхасан МТС-ĕнчи 10-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ К. Петров). Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 100 процент тултарнă, 457 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

7. Шăхасан МТС-ĕнчи 11-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ А. Григорьев). Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 107 процент тултарнă.

8. Шăхасан МТС-ĕнчи 7-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ П. Морозов). Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 127 процент тултарнă.

9. Шăхасан МТС-ĕнчи 12-мĕш тракторнăй бригада (бригадирĕ И. Моисеев). Бригада çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 100,4 процент тултарнă.

10. Йĕпреç МТС-ĕ (директорĕ Г. И. Иванов, политотдел начальникĕ К. А. Романов, старши механикĕ П. М. Михайлов). МТС çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 103 процент тултарнă.

Тракторсене ĕççĕр тăратмалла мар

Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ трактористсемпе трактористкăсене çуракинче çĕнĕ вăйпа ĕçлеме çĕклерĕ.

Майăн 9-мĕшĕ тĕлне республикăри Елчĕк, Йĕпреç, Шăхасан районĕсенчи машинно-тракторнăй станцисем çураки планне пурнăçларĕç. Елчĕк МТС-ĕ çуракинчи ĕç планне 113 процент, Йĕпреç МТС-ĕ 103 процент тултарчĕç. Хăйсен ĕç планне Вăрнар, Первомайски, Комсомольски, Канаш МТС-ĕсем те паян ыранах пурнăçлаççĕ.

Чкаловски машинно-тракторнăй станцинчи хĕрарăм-трактористкăсен 5-мĕш бригади хăйĕн çуракинчи ĕç планне 7—8 талăк хушшинче 102,5 процент тултарчĕ. Бригадир И. Ситов юлташ кашни тракторăн ĕçне сăнаса тăрса, кăлтăксене вăхăтра сирсе, çамрăк трактористкăсене ĕçре пулăшса пычĕ. Çакă вара трактористкăсене хăйсен пултарулăхне кăтартса ĕçлеме май пачĕ. Нумай трактористкăсем кулленех 6-шар гектар сухаласа пычĕç.

Комсомольски МТС-ĕн В. Степанов юлташ ертсе пыракан 5-мĕш бригади сакăр талăк хушшинче 665 гектар сухаласа çуракинчи ĕç планне 102 процент тултарчĕ, çак вăхăтра бригада пурĕ 350 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. К. Петров юлташ ертсе пыракан 3-мĕш номерлĕ бригада (Шăхасан МТС-ĕ) майăн 8-мĕшĕ тĕлне çураки планне 110 процент пурнăçларĕ, 457 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çак машинно-тракторнăй станцире ытти чылай трактористсем те паха тĕслĕхсемпе ĕçлеççĕ. Тракторист А. Григорьев çуракинче тумалли ĕçсен планне 117 процент тултарса хăй пĕччен 102 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Çавăн пекех горючине П. Морозов, И. Моисеев юлташсем те чылай перекетлерĕç, çураки планне тултарчĕç.

Йĕпреç МТС-ĕнчи трактористсен те çитĕнӳсем пысăк. 4-мĕш бригада (бригадирĕ Ф. Семенов) плана кĕске срокрах 108 процент тултарчĕ. Трактористка Терентьева Агриппина ĕç нормине кулленех 180—200 процент пурнăçласа пырать. Вăл «У—2» маркăллă тракторпа 9 талăк хушшинче 40 гектар ытла сухаларĕ. Çуракинче стахановла ĕçленĕшĕн Терентьева юлташ 35 ĕçкунĕ преми илет.

Нумай трактористсем, трактористкăсем кăçал пысăк пултарулăхпа организованность кăтартса ĕçлеççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ, тракторсемпе туллин усă кураççĕ, горючине перекетлесе ĕçлеççĕ. Анчах çитменлĕхсем те чылай-ха.

Етĕрне МТС-ĕ майăн 10-мĕшне çитсе те хăйĕн тракторĕсемпе 173 гектар çеç акнă, 931 гектар сухаланă. Колхозсемпе договорсем тунă тăрăх, МТС хăйĕн тракторĕсемпе çуракинче çеç 3.630 гектар сухаласа акмалла. Мĕншĕн-ха МТС хăйĕн обязательствине вăхăтра пурнăçласа пымасть? Мĕншĕн тесен тракторсен ĕçĕнче кунта кăлтăксем нумай. Паянхи куна 38 трактортан 29-шĕ çеç ĕçлеççĕ, 6 трактор çĕмĕрĕлсе кайнă. 3-шĕ автол турттарса пыманнипе ĕçлемесĕр лараççĕ. МТС дирекцийĕ бригадăсене пулăшса тăма куçса çӳрекен мастерскойсем туман.

Çĕрпӳ МТС-ĕн ĕçĕнче те çитменлĕхсем нумай. Майăн 9-мĕшне çитсе те Семенов ертсе пыракан 9-мĕш бригада ĕçе тытăнман-ха. Çак бригада халь пурĕ те 37 гектар çеç сухаланă, горючине вара нормăран ытларах 78 килограма çити расходласа тăкнă. Çавăн пекех МТС-ăн ытти бригадисем те начар ĕçлеççĕ.

Çĕрпӳ МТС-ĕ тракторсене юсас ĕçре япăх ĕçленишĕн никам та мар, руководительсем айăплă. МТС-ăн 8 трактор çуракине пачах тухман, 4 трактор халĕ те Çĕрпӳ станцинчех лараççĕ. Нумай тракторсен магнето ĕçлемест тата ытти кăлтăксем пур. Çапла пулсан та, Çĕрпӳ МТС-ĕн дирекцийĕ куçса çӳрекен мастерскойсем организацилемен, тракторсене çĕрле ĕçлеттермеççĕ.

Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕн те тракторсем час-часах ĕçлемесĕр лараççĕ. Мĕншĕн тесен кунта та трактористсене пулăшма куçса çӳрекен мастерскойсем организацилемен. Кăшт пĕчĕк кăлтăк килсе тухсанах, трактористсем вăхăта сехечĕ-сехечĕпе ахаль ирттереççĕ. 1-мĕш бригадăра 4 трактортан иккĕшĕ майăн 1-мĕшĕнчен пуçласах ĕçлемесĕр лараççĕ.

Çураки вăхăчĕ иртсе пырать. Тырăсене агротехникăллă лайăх срокра акса хăвармалла. Çуракине вăхăтра туса ирттерессинче МТС-сем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Елчĕк МТС-ĕ кăçал хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек организацилесе колхозсене вăйлăн пулăшса пырать. Хăйĕн договорĕсене вăл кашни колхоз тăрăхах чыслăн пурнăçларĕ, халĕ çураки ĕçĕсене планран иртерсе туса пырать. Кувакино, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕсем пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Тракторсем ĕççĕр тăнине халех пĕтермелле. Кашни тракторпа туллин усă курса, çураки ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлемелле. Трактористсен, трактористкăсен ĕç тухăçлăхне татах ӳстермелле.

Англипе Америка войскисем Çурçĕр Африкăра çĕнтерне пирки И. В. СТАЛИН юлташ У. Черчилль господинпа Ф. Рузвельт господин патне янă саламлă телеграммăсем

Майăн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле СССР Совнаркомĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Великобританин премьер-министрĕ У. Черчилль господин патне тата США президенчĕ Ф. Рузвельт господин патне çакăн пек саламлă телеграммăсем янă:

Премьер-министра Черчилле

ЛОНДОН.

Сире тата Британипе Америкăн паттăр войскисене Бизертăпа Туниса гитлерла тиранирен ирĕке кăларса чаплă çĕнтерӳ тунă ятпа саламлатăп. Сире малалла та ăнăçлăхсем сунатăп.

И. СТАЛИН.

Президента Рузвельта

ВАШИНГТОН.

Сире тата Америкăпа Британин паттăр войскисене Бизертăпа Туниса гитлерла тиранирен ирĕке кăларса чаплă çĕнтерӳ тунă ятпа саламлатăп. Сире малалла та ăнăçлăхсем сунатăп.

И. СТАЛИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 9-мĕшĕнче **Кубань** çинче, **Новороссийскран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн войскăсем тăшман укреплениййĕсене аркатасшăн çапăçнă. Уйрăм участоксенче хаяр контратакăсем туса, нимĕçсем хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла илме хăтланнă. Пирĕн чăçсем тăшман тунă атакăсене пурне те сирсе пăрахнă, ăна пысăк çухатусем кӳнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Хура тинĕсре пирĕн карап тăшманăн войскăсем турттарса пыракан транспортне путарнă.

Иртнĕ эрнере, майăн 2-мĕшĕнчен пуçласа 8-мĕшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче тата тăшман аэродромĕсем çинче нимĕçсен 930 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 230 самолет пĕтнĕ.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пĕр соединенин чăçĕсем тăшманпа çапăçса пынă. Пирĕн артиллеристсем нимĕç артиллерийĕн 14 батарейине, минометсен 6 батарейине пусарнă, ултă кĕпçеллĕ 3 миномета пĕтерсе тăкнă, темиçе вуншар дзотсемпе блиндажсене аркатнă. Азов тинĕсĕнче тăшманăн 4 картерĕпе 4 моторнăй лодкине вĕсенче ларнă гитлеровецсемпе пĕрлех путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чăçсем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн штурмовой тата бомбардировочнăй авиаци 40 вагон, 4 паровоз тата 25 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçура нимĕçсен 2 истребительне персе ӳкернĕ.

* * *

Лисичанск районĕнче тăшман совет подразделенийĕсем йышăннă халăх пурăнакан пункта каялла таварас шутпа темиçе контратака та туса пăхнă. Çапăçăва нимĕçсем пехотăн 2 полкне, 60 танк тата авиацин пысăк вăйĕсене кĕртнĕ. Контратакăсене сирсе пăрахса тата йышлăрах тăшмана чарса пырса, совет боецĕсем нимĕçсен 25 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн чăçсем артиллерирен персе, гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлернĕ, хăй тĕллĕн çӳрекен туппа тата грузсем тиенĕ темиçе автомашинăна пĕтерсе тăкнă, тăшман артиллерийĕн йывăр батарейине пусарнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пирĕн артиллери тăшманăн малти хĕррине тата сывăхри тылне персе тăрса, 13 дзотпа блиндажа аркатнă, 5 орудие, 2 миномет тата грузсем тиенĕ темиçе лава пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра нимĕçсем пирĕн оборонăн малти хĕррине çапăçуллă разведка туса пĕлесшĕн пулнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăнипе пирĕн боецсем 50 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ытти салтакĕсем васкаса каялла чакнă.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр участокра чугунçул çине минăсем лартса тухнă. Нимĕç войскисене турттаракан эшелон çав участока çитсен, взрыв пулнă. Паровоз тата 15 вагон пĕтĕмпех арканса пĕтнĕ. Взрыв вăхăтĕнче тата ишĕлнĕ вагонсем айĕнче нумай гитлеровец пĕтнĕ. Винница облаçĕнче кĕрешекен партизансен совет Украини 25 çул тултарнă ятпа хисепленекен отрячĕ тăшманăн бензин паракан пунктне сасартăк тапăннă. Нимĕç хуралне вĕлерсе пĕтерсе, совет патриочĕсем 12 тонна горючи çунтарса янă.

* * *

Югослави партизанĕсем хăйсем йышăннă халăх пурăнакан пунктсене Италипе нимĕç оккупанчĕсем каялла тытса илесшĕн пулса тунă нумай контратакăсене сире-сире пăрахнă. Хаяр çапăçусенче патриотсем 2 нимĕç танкне, 5 грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă, 8 миномет, 25 пулемет, 300 винтовка тата ытти çар хатĕрĕсем те тытса илнĕ. Белановицы районĕнче гитлеровецсем çарпа строительствăн Торд организацийĕн çурчĕсене пурне те çунтарса янă тата унăн мастерскойĕсене пĕтерсе тăкнă. Прибой местечки çывăхĕнче партизансем Южна Морава юханшывĕ урлă хунă чугунçул кĕперне сирпĕнтернĕ. Тепĕр районта патриотсем артиллери турттарса пыракан нимĕç поездне ӳпĕнтерсе янă.

Майăн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Кубань çинче, Новороссийскран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем противника хирĕç çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, Суворов ертсе пыракан минометчиксен чăçĕ, пехота подразделенийĕсене пулăшса пырса, гитлеровецсене икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Сауков тата Сухомлинов юлташсем ертсе пыракан артиллери батарейисем артиллерипе минометсен 6 батарейине, 21 пулемет точкине пĕтерсе тăкнă тата противникăн 8 блиндажне аркатнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, 3 танк тата 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Чугуевран çурçĕртерехре нимĕç пехоти юханшыв урлă каçма хăтланнă. Пирĕн малти подразделенисем противника пăшалсемпе пулеметсенчен персе кĕтсе илнĕ, 60 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чăçăн артиллерисчĕсем нимĕçсен 3 дзотне аркатнă, 5 автомашинине тата боеприпассем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре тăшман çине артиллерипе минометсенчен персе тăнă. Пĕр чăçăн снайперĕсем пĕр кун хушшинче 36 гитлеровеца вĕлернĕ. Совет летчикистребителĕсем нимĕçсен «Фокке — —Вульф—189» йышши самолетне пирĕн территори çине антарса лартнă. Çав самолетăн экипажне тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чăçăн участокĕнче нимĕçсем умлăнхыçлăн виçĕ хут атакăланă. Пирĕн боецсем тăшманăн атакисене сирсе янă, пур йышши хĕçпăшалсенчен те персе тăрса, 100 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

* * *

Гомель облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ майăн 2-мĕшĕпе 3-мĕшĕнче нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе хаяррăн çапăçнă. Тăшмана сасартăк пыра-пыра çапса, партизансем 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче йĕнерленĕ 90 лаша тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай. Полесье облаçĕнче кĕрешекен партизансен группи нимĕçсен 2 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата боеприпассемпе хĕçпăшалсем тиенĕ 16 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Кунсăр пуçне, совет патриочĕсем чугунçула пĕтĕмпе 7 километр ытла тăршшĕнче пăсса хунă.

* * *

Нимĕçсен 112-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен хăйĕн ирĕкĕпе тыткăна парăннă салтак Бруно Р., çара чĕниччен Вильгельмсгафенри суднăсем тăвакан верфьре ĕçленĕскер, çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть эпĕ хамăрăн тăван çĕршывра пултăм. Германире пурнăç питĕ хытă улшăнни куçа уççăнах курăнать. Сывлăшран тапăнасси çинчен пĕлтернисем пурне те йăлăхтарса çитерне. Сывлăшран бомбăсем пăрахнă хуласенчи çынсем нимĕç радиовĕ Англи авиацийĕ тапăннин результачĕсем çинчен суйса пĕлтернипе тарăхаççĕ. Вильгельмсгафен, акă, хаяр çапăçусем пынă хула пек. Пуринчен ытла верфьсем пысăк сиен курнă. Артиллери цехĕ, шăракан цех, каскалакан цех тата ытти корпуссем те ишĕлнĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн Главнăй хирургне, академике, медицина службин генерал-лейтенантне Николай Нилович Бурденко юлташа Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне парасси çинчен

Совет медицининче наука енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе аманнă Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене хирурги пулăшăвне парассине лайăх организацилес тĕлĕшпе хастарлăн тата ăнăçлăн ĕçленĕшĕн, Хĕрлĕ Çарăн Главнăй хирургне, академике, медицина службин генерал-лейтенантне, Николай Нилович Бурденко юлташа, **Ленин орденĕ тата «Серп и Молот»** ылттăн медаль парса, **Социализмлă Ĕç Геройĕн** ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи майăн 8-мĕшĕ

Тадеуш Костюшко ячĕпе хисепленекен поляксен дивизине туни

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнчĕ «СССР-ти Польша патриочĕсен союзĕ» СССР территорийĕ çинче Тадеуш Костюшко ячĕпе хисепленекен поляксен дивизине тума ыйтнине кăмăл тунă. Вăл дивизи Хĕрлĕ Çарпа пĕрле нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешмелле. Дивизие тума тытăннă та ĕнтĕ.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене тата чугунçул узелĕсене пырса çапни

Майăн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене çĕнĕрен вăйлăн пырса çапнă. Нимĕç истребителĕсем чăрмантарнă пулин те, пирĕн авиацин пысăк соединенийĕсем хăйсен умне лартнă задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Тăшман аэродромĕсемпе сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 190 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Пирĕн 62 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн авиаци çавăн пекех Брянск, Полтава, Орел, Харьков, Лозовая, Иловайская, Барвенково, Мценск, Новгород тата чугунçулăн ытти шултăра узелĕсемпе станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тапăннине пула вăйлă пушарсем тухнă, çар склачĕсем вăйлăн сирпĕннĕ. Тăшманăн чугунçул эшелонĕсене нумай аркатнă.

Йĕпреç МТС-ĕ çураки планне тултарчĕ

Йĕпреç МТС-ĕн директорĕ Иванов телеграммăпа пĕлтернĕ тăрăх, МТС майăн 9-мĕшĕ тĕлне çураки вăхăтĕнче тракторпа ĕçлемелли плана 103 процент тултарнă. МТС 2080 гектар çурхи суха тунă, 1.100 гектар акнă, 410 гектар çĕре культиваци тунă, 2.600 гектар сӳреленĕ, 2.820 гектар сухаланă. Çурхи ака ĕçĕсем малалла пыраççĕ.

Мари республикинче çураки мĕнле пырать

ЙОШКАР-ОЛА, майăн 9-мĕшĕ. (Телеграфпа). Сирĕнпе ăмăртса ĕçлекен Мари республикинчи колхозсем майăн 8-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсем акмалли плана 17,2 процент пурнăçларĕç. Çураки ĕçĕсенче колхозниксем мăйракаллă шултăра выльăхсен вăйĕпе туллин усă кураççĕ. Çуракинче ĕне-вăкăрсене пурĕ 576 пуç ĕçе кӳлнĕ.

Çураки ĕçĕсенче Звениговски район малта пырать. Ку район майăн 9-мĕшĕ тĕлне çураки планне 63,8 процент пурнăçларĕ. Звениговски тата Волжски районсенчи малта пыракан колхозсем тĕштырăсем акса пĕтерчĕç. Оршански районри машинно-тракторнăй станци хăйĕн çуракинчи ĕç планне 70 процент тултарчĕ.

Г. Эрский,
«Марий Коммуна» хаçачĕн ответлă редакторĕ.

„Сталь“ колхоз çураки пĕтерне

ТАВАЙ. (Телеграфпа). «Сталь» колхоз (председателĕ Е. Васильев, агроном В. Чайкин) тĕштырăсемпе пăрça-ясмăксене акса пĕтерчĕ. Пĕтĕмпе 321 гектар, 8 ĕç кунĕнче акнă. Агротехника мероприятийĕсене тĕплĕн пурнăça кĕртнĕ. Планран ирттерсе 10 гектар акнă, вĕсенчен 9 гектар—оборона фончĕ валли. Ĕçре С. Жарков ертсе пыракан 4-мĕш бригада тата И. Смирнов ертсе пыракан 2-мĕш бригада уйрăмах палăрчĕç. Çуракинче Е. Горланов, Е. Васильева, Е. Чугунова, Н. Юркина, С. Жарков, В. Краснов колхозниксем пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç, кулленхи нормăсене 140—160-шар процент тултарса пычĕç. Халĕ колхоз çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартма тытăнать.

В. Чернов.

Примерлă агитатор

ВĂРНАР. Уртемкассинчи колхозри комсомолецсем çуракинче примерлăн ĕçлеççĕ. Комсомолец агитатор Николай Егоров çуракинче ĕçлеме çамрăксенчен звено организацилерĕ. Егоров юлташ акара ĕç нормине кулленех 150—160 процент тултарса ĕçлет, сухаçăсем, сӳреçĕсем хушшинче агитациллĕ ĕçе лайăх туса пырать.

Звенори сеялщик Г. Архипов ĕç нормине кулленех 150—160 процент тултарать, сӳрелекенсем Нузыркинпа Кошкин юлташсем те нормăна кулленех 200—250 процент тултараççĕ. Кану вăхăтĕнче звенора тăтăшах хаçатсем вулаççĕ, нумай пулмасть Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне вуласа вĕренчĕç. Сталин юлташăн приказĕ çамрăксене тата хастарлăрах ĕçлеме хаваслантарчĕ.

Олангаев.
ВКП(б) Вăрнар райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ

Комсомолецсем çураки ĕçĕсене çителĕклĕн хутшăнмаççĕ

ШĂХАСАН. „Молодой колхозник“ колхоз сеялкăсем пур çĕртех тырра алăпа акса, çураки ĕçĕсене кая хăварса пырать. Колхозăн çурхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкĕ 236 гектар ытла. 8 талăк хушшинче халĕ мĕнпурĕ те 85 гектар çеç акнă. Сухаçăсем кунне 1,25-шер гектар сухаламалла пулсан, 0,80-шер гектар çеç сухаласа пыраççĕ. Колхоз председателĕ П. Николаев уйхир ĕçĕсене ертсе пымасть. Вăл часчасах уйра ĕç пынă çĕрте мар, правленире те пулмасть.

Колхозра агитациллĕ-ăнлантарулă ĕç сӳнсе ларнă. Парти кандидачĕсен группи (руководителĕ Григорьева юлташ) тата комсомол организацийĕ (секретарĕ Макаров) çураки ĕçĕсене ертсе пымаççĕ.

В. Веселов

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти промышленность предприятисенчи социализмлă ăмăртăвăн апрель уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти промышленность предприятисенчи социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Вăрнар райпромкомбинатĕнчен илсе, Сĕнтĕрвăрринчи райпромкомбината (Управляющи ĕçĕсене тăваканĕ Питин, райсовет исполком председателĕ Маклашкин) пама йышăннă тата ăна ĕçре палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа памалла тунă.

Улатăрти горпромкомбината (управляющийĕ Суров, хула совет исполком председателĕн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ Гуськов) 10.000 тенкĕ укçа парса премилемелле тунă, Гуськов юлташа горпромкомбината панă укçаран 1.000 тенкĕ парса премиленĕ.

Çĕмĕрлери райпромкомбината (управляющийĕ Никитин, райсовет исполкомĕн председателĕ Носков) 5.000 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Вăрнар райпромкомбинатне (управляющийĕ Кузнецов, райсовет исполкомĕн председателĕ Никитин) 5.000 тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Совнарком апрель уйăхĕнче Ишлей, Куславкка, Октябрьски, Первомайски, Шăмăршă, Çĕрпӳ, Етĕрне тата Тăвай райпромкомбиначĕсем, Шупашкарпа Канаш горпромкомбиначĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Çакăнпа пĕрлех Совнарком апрель уйăхĕнче Кувакино, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Шупашкар, Чкаловски тата Елчĕк райпромкомбиначĕсем начар ĕçленине палăртнă.

Инвалидсен кооперативĕн артелĕсенчи социализмлă ăмăртăвăн апрель уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ инвалидсен кооперативĕн артелĕсенчи социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи апрель уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Совнарком Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм» артеле (правлени председателĕ Радькова, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин) Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Сĕнтĕрвăрри райисполкомĕн председательне Маклашкин юлташа «Социализм» артеле панă 10.000 тенкĕрен 1.000 тенкĕ парса премиленĕ.

Канашри «Красный воин» артеле (председателĕ Корчагин, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме укçан 6.000 тенкĕ парса премилеме йышăннă.

Улатăрти «Союз инвалидов» артеле (правлени председателĕ Сивогривов, горсовет исполкомĕн председателĕ Поляков) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме укçан 5.000 тенкĕ парса премилеме йышăннă.

Совнарком 1943 çулхи апрель уйăхĕнче çак артельсем лайăх ĕçленине палăртнă: Шупашкарти «Чебторгин» артель, Ишлей районĕнчи Чаканарти «Красный стрелок» артель, Комсомольски районри Вутланри артель, Улатăр районĕнчи Кирери Киров ячĕпе тăракан артель тата Канаш районĕнчи Сиккассинчи артель.

Пĕччен икĕ çыншăн ĕçлессĕ

КАНАШ. Хулари апат-çимĕç комбиначĕн коллективĕ Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне сӳтсе явнă хыççăн хăй çине производство программине кашни уйăхрах 135 процентран кая мар пурнăçлама обязательство илчĕ. Комбинат апрель уйăхĕн производство программине 113,5 процент пурнăçларĕ.

Планран ирттерсе 300 килограмм шоколад туса кăларнă.

Халĕ ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту çĕнĕрен вăйланса кайрĕ. Ăмăртура уйрăмах премĕкпе карамель тăвакан цехсем малта пыраççĕ. Çак цехсенче ĕçлекенсем В. Скворцова, М. Шалина, К. Горбунова, Н. Сергеева юлташсем кулленхи ĕç нормине 200—250 процент пултараççĕ, вĕсем пĕччен икĕ çыншăн ĕçлеççĕ.

Ăмăртăва хутшăннă май, цехсенче ĕçлекен техничкăсем А. Николаевăпа А. Архипова юлташсем кашни цехсенех санитарипе гигиенăн пур правилисем хушнă пек тытма пуçларĕç.

— Цехсенчи тасамарлăхпа тирпейсĕрлĕх ĕç тухăçлăхне чакараççĕ, çавăнпа та эпир, ăмăртăва хутшăнса, хамăр çине цехсене яланах таса та тирпейлĕ тытма пулатпăр. — теççĕ вĕсем.

Комбинат май уйăхĕн ĕç планне 40 процента яхăн пурнăçларĕ те ĕнтĕ.

Ф. Малышкин.
(Хамăр корр.).

ГРАНАТА ЫВĂТАКАНСЕН ĂМĂРТĂВĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Янкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, граната ывăтакансен заочнăй ăмăртăвне хутшăнса, кашни кунах тренировкăллă занятисем туса ирттерчĕç. Ĕçе пуçăннă хыççăн ăмăртăва хутшăнас текенсен шучĕ 25 çынна çитрĕ. Граната ывăтма хăнăхмашкăн арçын ачасемпе пĕрлех хĕрачасем те хутшăнчĕç. 25 çынран 10-шĕ хĕрачасем.

Граната ывăтассипе малтанхи кунах Г. Исанов, П. Димитриев тата Г. Байков комсомолецсем пример кăтартрĕç. Вĕсем 30—35-шер метра ывăтрĕç. Тренировкăллă занятисене час-часах тата йĕркеллĕ туса ирттернине пула çавсемех 40—45-шер метр таран ывăтма пултарнине кăтартрĕç.

Н. Виноградов.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Райком инструкторĕ

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Михаил Андрианович Андрианов юлташ ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ пулса 1941 çултанпа ĕçлет. Унччен вăл «Красный Октябрь» колхоз председателĕнче ĕçленĕ. Çав вăхăтра вăл ертсе пыракан колхоз районра малта пынă.

ВКП(б) райкомĕ ăна партин территориальнăй 4 пуçламĕш организацийĕ çумне, пĕр кандидатсен группи çумне тата районри 6 учреждении коммунистсем патне çирĕплетнĕ. Унăн участокĕнче пĕччен коммунистсем 5 çын пур.

Андрианов юлташ парторганизацисенче час-часах пулать. Вăл вĕсене ĕç планĕсем тума, парти хуçалăхне йĕркелеме пулăшать, парторганизацисен секретарĕсене протоколсемпе парти документĕсене çырма вĕрентет.

Çавăн пекех вăл коммунистсен пухăвĕсене мĕнле хатĕрленсе ирттернине тĕрĕслет, çитменлĕхсене пĕтерме çийĕнчех пулăшу парать. Час-часах уйрăм коммунистсемпе тĕл пулса калаçать, уйрăмăнах çамрăк коммунистсем ВКП(б) уставне мĕнле ăнланнине тĕрĕслет, вĕсем члена куçма хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленипе паллашать. Вĕсен ыйтăвĕсем çине çийĕнчех ответлет, ВКП(б) историне вĕренес ĕçре те кулленех пулăшса тăрать.

Андрианов юлташăн участокĕнчи пуçламĕш парторганизацисенче кăçал кăна ВКП(б) членне 5 çынна, кандидата 10 çынна илнĕ.

Вăл план тăрăх ĕçлет, ĕç планне райкомăн оргинструкторски отделĕн планĕпе килĕшсе тăвать, плана яланах тĕплĕн пурнăçласа пырать.

Унăн участокĕнчи колхозсем районра малти вырăна тухрĕç. Вĕсем пурте çуракине лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илчĕç. Кăçал гектартан çĕршер пăтран кая мар тырă туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем инструкторсене ĕçре яланах пулăшса пыраççĕ. Час-часах канашлусем ирттереççĕ, тивĕçлĕ кăтартусем параççĕ. Инструкторсем райкомăн кашни бюровĕнчех пулаççĕ.

М. Андрианов юлташ хăйĕн политикăллă пĕлĕвне куллен ӳстерсе пырать. Вăл «ВКП(б) историйĕн Кĕске курсĕн» пур сыпăкĕсене те вĕренсе пĕтерне. Халĕ Ленин—Сталин произведенийĕсене вĕренет. «Спутник агитатора», «Большевик», «Партийное строительство» журналсенчи статьясене йĕркеллĕн вуласа пырать. Андрианов юлташ райкомăн ытти инструкторĕсемшĕн пример пулса тăрать.

В. Веселов.

Парти ретне илес ĕçе вăйлатмалла

ЙЕПРЕÇ. Райпарторганизаци юлашки вăхăтра парти ретне илес ĕçе чылай вăйлатрĕ. 1942 çулта парти ретне 53 çын илнĕ пулсан, кăçал апрель уйăхне çитичченхи вăхăтра 146 çынна илнĕ.

Парти ретне ӳстерес тĕлĕшпе леспромхозри пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Бельский юлташ) аван ĕçлет. Çак пуçламĕш парторганизацинче пĕлтĕрхи июнь уйăхĕнчен вара парти ретне 9 çын илнĕ. Пуçламĕш парторганизаци парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕçе куллен туса пырать. Рабочисемпе служащисем тата инженерла-техникла работниксем хушшинче парти уставĕпе программине вĕренмелли кружок ĕçлет.

Анчах хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче — халăх судĕнчи (секретарĕ Алексеев), Хумпуç Патăръелĕнчи (Ильин), лесхозри (Дубинин), госбанкри (Абрамова) пуçламĕш парторганизацисем 1942 çултанпах парти ретне пĕр çынна та илмен.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче парти ретне илме ыйтса панă заявленисене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Райсовет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизацинче (секретарĕ Ямбашев) парти членĕн кандидачĕ Федорова члена куçма ыйтса панă заявленине 9 уйăх, хушшин пăхса тухмасăр вырттарнă. Çав парторганизацинче 4 кандидатăн стаж иртсе кайнă.

Районри парторганизацинчи мĕнпур коммунистсен шутĕнчен парти кандидачĕсен стажĕ тухнисем 44 процент шутланаççĕ. Вĕсен шучĕ Туçари, Кĕлĕмкассинчи пуçламĕш парторганизацисенче уйрăмах пысăк.

Д. Михайлов.

Вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн

Шупашкарти 3-мĕш номерлĕ вăтам шкул ачасен çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне ирттерме тимлĕн хатĕрленет. Халĕ учительсем вĕренӳ çулĕнче вĕреннине çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Классенче повторени урокĕсем туса ирттереççĕ. Уйрăм предметсемпе консультацисем ирттерме план туса хатĕрленĕ.

Çуркуннехи пĕлӳ тĕрĕслевне хатĕрленес тĕлĕшпе учительсенчен уйрăмăнах Е. С. Данилова, В. С. Никитин юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсен класĕсенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 93 процент шутланать.

Вĕренекенсем хушшинче пĕлӳ тĕрĕслевĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту çĕнĕ çекленӳпе пуçланса кайрĕ.

6-мĕш «А» класра вĕренекен Гера Никифоров иртнĕ уйăхра вырăс чĕлхипе начартарах вĕреннĕ пулсан, халĕ «хорошо» паллăсем илекен пулчĕ. 7-мĕш «Б» класри Калакутскийпе В. Лаврентьев вĕренекенсем вăрçă ĕçĕн предмечĕпе «отлично» вĕренме пуçларĕç.

Вĕренекенсен хушшинче Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне вĕренессине организацилени вĕренӳ пахалăхне нумай хăпартрĕ. Вĕренекен ачасем Сталин юлташăн приказне питĕ тимлĕн итлеççĕ, «отлично», «хорошо» вĕренме обязательствăсем илеççĕ.

Вĕренекенсене тĕрĕслеве хатĕрленме шкулта иртен пуçласа каçченех библиотека ĕçлет. Ачасем кирлĕ кĕнекесене час-часах библиотекăран илсе усă кураççĕ. Пĕлӳ тĕрĕслевне ирттерме расписани, тĕрĕслеве ирттермелли текстсене, задачăсене, хут, чернил, карандаш тата ыт. те хатĕрлесе çитерне.

В. Козлова.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

18. Америка хĕрĕн çырăвĕ

Хум хыççăн хум çĕклерĕ тинĕс,
Хум хыççăн хум чăн тĕпĕнчен.
Хум хыççăн хум кăвак та симĕс
Çырусем пек каяç инçе.

Шавлать, кĕрлет тинĕс хăвачĕ, —
Лăплантараймăн эс ăна!
Чăваш ачин мухтавлă ячĕ
Океан урлă ăсанать.

Вут-çулăмра çуралнă чапăн
Çуначĕ çил пек сарлака.
Ăçтан çӳлте вĕçме чаратăн
Хăюллă ăмăрткайăка?

Çапла чăваш çӳле çĕкленчĕ,
Ун ячĕ юрă пек янрать.
Пичетленет Орлов портречĕ
Нью-Йоркра та Лондонра.

Кăтра та йĕпкĕн хура çӳçĕ,
Инçе тинкерне куçĕсем,
Нимле ултавлă илĕртӳсĕр,
Чуна çавраççĕ пăхнăçем.

Эсĕ вара тӳрех калатăн:
Ку çыннăн чĕринче чăнах
Никам çĕнтерейми хăватăн
Асамлă çулăмĕ çунать.

Çапла тĕнче хальччен курман ĕç
Курать. Нимрен те тĕлĕнмен
Мăнкăмăллă американец
Уçать пач çĕнĕ кăмăлне.

Хальччен вăл хăй тĕлĕнтеретчĕ, —
О, Янки!—тетчĕç тĕнчере.
Халь ак совет çыннин портречĕ
Кĕтмен çĕртен тĕлĕнтерет.

Çитменнине—чăваш, кĕтӳçĕ,
Герой-вĕçевçĕ—О, ол-райт!
Аван!—тет инçетри союзник,
Вăл пирĕн ĕçсене ырлать.

Самолетсем, танксем пама та
Юрать, тет вăл, ку çынсене.
Тивелĕ карапсем хăватлăн
Вара касаççĕ хумсене.

Вара шавлан океан урлă
Танксемпе çимĕç хушшинче
Çыру килет. Пайтах вăл хурлăх
Курать çав вăрăм çул çинче.

Шыв айĕнчен—хурах пек кимĕ,
Çӳлтен çăханĕ тапăнать.
Анчах та пӳлеймест пĕр нимĕн,
Пĕр нимĕн чараймасть ăна.

Антив, пăтрантăр хура тăвăл,
Тăшман вĕреттĕр ăншăртне.
Америк хĕрĕн юратăвĕ
Вĕçсе çитет герой патне.

...Пĕр каç бомбежкăран килсессĕн
Орлов çав çырăва илет.
Çыру ăçтаннине пĕлсессĕн
Герой питех те тĕлĕнет.

Фотоӳкерчĕк. Пĕчĕк татăк —
Ют чĕлхепе çырнă çыру.
(Çак секретсемшĕн эп ыйтатăп
Геройăмран кăшт каçару).

Сăпайлă хĕр. Кăлкан пек шурă,
Укаллă, хумхануллă çӳç...
Тепĕр енче открытка урлă
Икĕ сăмах: —Тăван Союз!

Ку вырăсла. Анчах çырăвĕ
Акăлчанла. Тепĕр кунне
Орлов чылай çĕре çӳрерĕ
Пĕлмешкĕн хĕрĕн кăмăлне.

Тăлмач тупмашкăн çăмăл мар ĕç,
Анчах çапах пирĕннисем
Акăлчанла чухла пуçларĕç
Тăванлă туслăх ӳснĕçем

Орлов журналиста тĕлпулчĕ;
Леш савăнса та хăвăртах
Куçарса пачĕ. Кăкăрта
Орловăн ырă кăмăл тулчĕ.

«Çунмастăп,—тет пике, —пĕлесшĕн
Эсир çемьеллĕ е хусах,
Анчах паян эпир пĕрлешнĕ
Тăван та пĕр çемье пулса.

Юмах пек сирĕн пурнăç çулĕ.
Вăл çул пур кайăк çулĕнчен,
Чи çӳллĕ сăртсенчен те çӳллĕ,—
Сăмах çитмест ман тĕлĕнсе.

Эсир чăваш. Çавăн пек халăх
Пурри çинчен пĕлтĕм паян.
Ой, пархатарлă çутçанталăк,
Мĕн пек эс аслă та пуян!

Океан урлă эп хăям-и
Сире тăванăн ал пама!
Хумхан, хăватлă океанăм,
Илсе çитер çак салама!

Салам çуначĕ пултăр çăмăл,
Кĕскелчĕр пирĕн çулйĕрсем.
Хум урлă çиттĕр ырă кăмăл,
Тĕлпулăпăр-ха çĕнтерсен.

Тĕлпулăпăр. Телей сунатăп
Сире çак юнлă вăрçăра.
О, сирĕн сарлака çунатăр
Пире те тамăкран çăлать.

Хумхан, хăватлă океанăм,
Ыр туслăха савса кĕрле!
Эпир халь ĕмĕр пĕр тăванăн
Утатпăр сирĕнпе пĕрле».

Çыру вĕçленчĕ. Ашă çил пек
Вăл пулчĕ летчик кăмăлне.
Орлов сасартăк аса илчĕ
Кунта çулпуçăн сăмахне.

Çав çутă чăнлăх тухса тăчĕ
Чи аслă шурăмпуçĕ пек:
«Пĕрлешĕ пирĕн тĕрĕс вăрçă
Пур халăхсенĕн вăрçипе!»

(Юлашки пулать).

(Малалли: Поэма 61-мĕш номертен пичетлеме пуçланă).

Пирĕн авиаци тăшманăн чугунçул узелĕсемпе станцийĕсене тапăнни

Майăн 8-мĕшĕнче пирĕн авиаци чугунçулăн шултăра узелĕсемпе станцийĕсем çине—Брянск, Полтава, Кировоград, Белгород, Змеевка т. ыт. станцисем çине те бомбăсем пăрахнă. Çакăнпа пĕрлех пирĕн самолетсем Мценск—Орел, Орел—Карачев, Рыльск—Ворожба, Новосокольники—Витебск, Людиново—Жиздра, Спас—Деменск—Ельня участокĕсенчи чугунçул эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çапла пырса тапăннине пула паровозсем, чугунçул составĕсем тата боеприпассемпе çар грузĕсем тиенĕ автомашинăсем нумай арканнă тата станцири сооруженисем ишĕлнĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 75 самолетне персе ӳкернĕ. Боевой задание пурнăçлама кайнă пирĕн 21 самолет каялла таврăнман.

Ют çĕршывсенче

Тунисри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Африкăри союзниксен вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, ĕнер пĕтĕм Тунис фрончĕпе союзниксен войскисем наступлени туса пынă. Тунисăн çурçĕр-хĕвел-тухăç районĕнче Англин пĕрремĕш армийĕн бронетанковăй чаçĕсем татах малалла куçнă. Çакăнпа пĕрлех американецсен иккĕмĕш корпусĕн бронетанковăй вăйĕсем Бизертăпа Матертан пырса Англин пĕрремĕш армийĕн чаçĕсемпе пĕрлешнĕ.

Тăшман хирĕç тăрасси пĕтĕмпех тенĕ пек путланса ларнă. Тăшман салтакĕсем ушкăнăн-ушкăнăн тыткăна парăнаççĕ. Хирĕç тăмалли пĕрпĕринчен уйăрălса тăракан вакă узелсене йышăнасси кăна юлнă. Тăшман питĕ нумай хĕçпăшал пăрахса хăварать. Майăн 5-мĕшĕнчен пуçласа союзниксен войскисем сахалтан та 20.000 çын тыткăна илнĕ.

Ĕнер кунĕпех союзниксен авиацийĕ тăшмана хирĕç вăйлă атакăсем тунă. Войскăсем тăнă çĕре, автомашинăсем çине тата Бон çурутравĕ çинчи тăшман аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Алжирти радио пĕлтерне тăрăх, тăшманăн 120.000 салтакне хупăрласа илнĕ. Нимĕçсемпе итальянецсем йĕркесĕррĕн каялла чакаççĕ, хирĕç тăрса çапăçма пултараймаççĕ. Вĕсен оборонин юлашки линийĕсене аркатса тăкнă.

ГЕРМАНИ ДИВИЗИЙĔСЕН 3 КОМАНДИРНЕ ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтерне тăрăх, союзниксен войскисен Çурçĕр Африкăри штабĕ ятарласа çапла пĕлтерне: американецсен иккĕмĕш корпусĕ паян Бизерта районне тăшман войскисен юлашкийĕсенчен тасатса çитерне. Вăл районта тăшман хирĕç тăрассине пĕтĕмпех пусарнă.

Союзниксем çак кунсенче тыткăна илнисен хушшинче нимĕçсен виçĕ дивизийĕн командирĕсем хăйсен штабĕсемпе пĕрлех лекнĕ. Вăл шутра бронетанковăй 15-мĕш дивизин командирĕ те пур.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтерне тăрăх, союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генерал çапла каланă: тĕнĕл держависен войскисем Çурçĕр Африкăра, хупăрласа илнĕ хăшпĕр группăсене шутламасан, организованно хирĕç тăма пăрахрĕç, тенĕ.

АМЕРИКА ПИЧЕЧĔ СОЮЗНИКСЕМ ТУНИСРА ТУНĂ ЧАПЛА ÇĔНТЕРӲ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Америка пичетĕнче союзниксен войскисем Тунисра çĕнтерни çинчен хавасланса çырнă статьясем пичетлесе кăлараççĕ.

«Нью-Йорк Таймс» хаçат Тунисра аркатса тăкнă Италипе Германи армийĕн юлашкийĕсем хăтăлас шутпа тинĕс хĕрринелле çул тытрĕç, тесе çырать. Анчах вĕсене эвакуацилемелли карапсемпе самолетсем курăнмаççĕ. Нумаях пулмасть гитлерла каппайчăк Германи Сталинград патĕнче хăйĕн армийĕсене çухатрĕ. Гитлер халĕ союзниксем унăн упаленекен тусне тапăнассине е союзниксем пĕр-пĕр çĕршыва тапăнса кĕрессине хăраса кĕтсе тăрать. «Çĕнтерӳ çулĕ,—çырать хаçат, —йывăр. Уншăн тӳлемелли хак пысăк, анчах çĕнтерейми тискер-кайăк çинчен пулнă юмах вилчĕ. Вăл тискере ирĕклĕхе юратакан халăхсем çĕнтерĕç».

«Нью-Йорк Геральд трибюн» хаçат Туниспа Бизертăна йышăннă союзниксен войскисем вăйлăн тата хăюллăн наступлени туса пынине паллă тăвать. Çак çĕнтерӳ,—тет хаçать,—çав тери паллă вырăн йышăнса тăрать. Африкăна союзниксен текех карапсем, çар хатĕрĕсем тата çынсене яма кирлĕ пулмасть. Союзниксен Европа континентне тапăнса кĕмелле пулать.

Вышинский юлташ Англипе Америка пичечĕн представителĕсене тунă заявлени пирки ютçĕршыв пичетĕнче мĕн çыраççĕ

США

НЬЮ-ЙОРК, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем тĕлĕшпе хăшпĕр фактсем çинчен Англипе Америка пичечĕн Мускаври представителĕсене тунă заявлени пирки США-ра анлăн çыраççĕ.

Заявление пичетре те, радио тăрăх та тĕплĕн панă, çĕршывра вăл питĕ интереслентерне. Америкăри Ассошиэйтед пресс тата Юнайтед пресс агентствисем вăл завленин пĕтĕм текстне пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк Таймс», Нью-Йоркри «Сэн», «Нью-Йорк пост» тата ытти хаçатсем те Вышинский юлташ тунă заявление пичетлесе кăларнă.

АНГЛИЯ

ЛОНДОН, майăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ Англипе Америка пичечĕн представителĕсене тунă заявлени Англири обществăллă ушкăнсенче паллă вырăн йышăнса тăрать. Англири радио вăл заявление ачлăн пĕлтерне. Ирхи хаçатсем Вышинский юлташ тунă заявлени çинчен кĕскен пĕлтерне. Каçхине тухакан «Ивнинг стандарт», «Ивнинг ньюс» тата «Стар» хаçатсем вăл заявление пичетлеме пĕрер колонка таран панă. «Манчестер гардиен» хаçат ăна пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пичетлесе кăларнă. Лондонри журналистсем хушшинче çапла калаççĕ: Польшăн Совет Союзĕнчи официальнăй представителĕсем ССР Союзне хирĕçле ĕçсем туни çинчен Англи общественноçĕ çав заявленирен пирвайхи хут пĕлет. Çавăн пекех СССР-та йĕркеленĕ Польша чаçĕсене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра вăрçă ĕçне Польша правительстви хутшăнтарасшăн мар пулнине те пĕлтĕмĕр. Çак фактсем кунта питĕ тĕлĕнтерчĕç.

АМЕРИКА ÇАРĔН ХИМИ СЛУЖБИН НАЧАЛЬНИКĔ ХИМИЛЛĔ ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтерне тăрăх, Америка çарĕн хими службин начальникĕ Портер генерал çапла каланă: тăшман ядсемпе усă курас пулсан, ăна хирĕç вăйлăн ответлеме Пĕрлешӳллĕ Штатсен запас çителĕклĕ, тенĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче токсика газĕсемпе усă курма чаракан Женевăри протокол çине алă пусман пулин те,—тенĕ Портер,—США газпа усă курса вăрçма шутламасть, тăшман газсемпе вăрçма пуçлас пулсан, çавна ответлесе кăна усă курма шутлать. Газпа усă курса вăрçма пуçлас пулсан, США техники тата иртнĕ вăрçăра союзниксем туяннă опыт газсемпе анлăн усă курма май парĕç.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ПАЛЕРМОНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радиостанцисем пĕлтернипе усă курса, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян кăнтăрла союзниксен 400 ытла самолечĕ Италин Палермо портне вĕçсе пырса тапăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сĕнтĕр районĕнчи Ювановăри сельпон çаврака пичечĕ çухалнă, ăна законлă мар тесе шутламалла.

Чăваш АССР Наркомпрос сотрудникĕсен коллективĕ Педучилищĕсен инспекторĕ

СЕРГЕЕВА Анна Сергеевна

вилни çинчен тата çемьипе, тăванĕсемпе пĕрле хурланни çинчен пĕлтерет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1040

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.